**Пурнăç хакĕ**

Тин кăна операци пĕтнĕ хыççăн сестра тепĕр операци валли инструментсем хатĕрлесе çитерсен пукан çинче ларакан хирург, лутра та сарлака çын, ура çине тăрса уткалама пуçларĕ.

- Нина! - ыйтрĕ вăл сестраран, - миçе çын пулчĕ паян?

Нина Багрова, операци сестри, çамрăк хитре хĕр, çӳхе перчатка тăхăннă аллисене малалла кăнтарса ăшĕнче шутласа тухнă пек пулчĕ.

- Вунтăххăр, Лука Семенч!

- Пĕлместĕр-и, миçе юлнă тата?

Инçетре, аслати кĕрленĕ пек, тупа сасси илтĕнсе кайрĕ, пуç урлă самолетсем вĕçсе иртсе кайнă пек туйăнчĕ. .

- Чылай пулать пулас, - терĕ Нина пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн, - илтетĕр-и, çапăçу çĕнĕрен вăйланма пуçлать!

Хирург аллисене çӳлелле кăнтарса пĕтĕм пĕвĕпе карăнса илчĕ те каллех пукан çине кайса ларчĕ.

- Ывăнтăр-и мĕн, Лука Семенч?

- Ларрей талăкне 200 ампутаци тунă, эпир...

- Эпĕ виççĕр тума та хатĕр! - инструментсене чăнкăртаттарса илчĕ

Нина.

- Эсир çамрăк, манăн... тепĕр ик-виç кунтан мĕнелник çитет. 50 çул!

- Нивушлĕ? Сăнран пăхсан 40 çултан ытла мар сире, - терĕ Нина, - тепĕр çамрăкран ытла ĕçлетĕр.

- Ну, апла пулсан, - ура çине сиксе тăчĕ Лука Семенч, - кам унта черетре? Парăр сĕтел çине.

- Хăшне памалла? - ыйтрĕ алăк патĕнче кĕтсе тăракан санитарĕ, -черетре - алăран аманни, черетсĕр вара - йывăр аманнă çын.

- Парăр йывăр аманнине!

Таса простыньпе витсе хунă сĕтел çине аманнă çынна йăтса кĕрсе хурсан

Лука Семенч вăл çыннăн суранĕсене тĕрĕслеме пуçларĕ.

- Аманнă çын, — ыйтрĕ Лука Семенч, - хушамату мĕнле?

Ответ кĕтсе илейменнипе Лука Семенч сестра çине пăхса илчĕ.

- Ну, мĕнле?

- Пуçлăр, манăн пурте хатĕр!

- Чăтать-и? Вилмест-и?

-Да, Лисицын пек, сĕтел çинчех юлмасан...

- Ман шутпа, Лисицын кунтан çăмăлтăрах пулнă, пăхăр-ха эсир! -Лука Семенч аманнă çынна тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ. - Йĕри-тавра суран: кăкăр, хырăм, ура... ăнланмастăп эпĕ, мĕнле пурăнать вăл?

- Вăрçă, Лука Семенч, вăрçă! - ăнлантарма хăтланчĕ Нина, - авă илтĕнеççĕ тупă сассисем...

- Ну, да! - унăн шухăшне ăнланса илчĕ Лука Семенч, - вĕсем çынран татăксем кăна хăварма пултараççĕ, анчах вăл татăксем пирĕн сĕтел çине лекмеççĕ, ку... пĕлместĕп ĕнтĕ, мĕнрен пуçлас? Ну-ка, чĕнĕр-ха кунта Смелова!

Смелов, çамрăкрах хирург, чĕннĕ хыççăн часах пӳлĕме пырса кĕчĕ.

- Мĕн, Лука Семенч, ассистенци кирлĕ-и?

- Çук, Алексей Михалч, сире консультацие чĕнтĕм: тархасшăн, алтымарне тытса пăхăр-ха: пур-и, тапать-и вăл?

Смелов сехет кăларса алтымарне тĕрĕслесе тухрĕ.

- Тапать, çип пек çинçе, хушăран çухалса та илет. Смелов татах тепĕр хут тытса шутлама тытăнчĕ.

- Пĕрре, иккĕ... ак çухалчĕ... виççĕ...

- Пĕтĕмпе миçе?

- -120!

- - Да, - пуçне пăркаласа илчĕ Лука Семенч, - пăхăр-ха пичĕ çине: чĕрĕ сăн та юлман вĕт унăн!

- -Ман шутпа, Лука Семенч, часах чунĕ унăн...

- -Мĕн?..

- Эпĕ, - татах алтымарне тытса пăхрĕ Смелов, - операци тумăттăм: пурпĕр

тӳсеймест...

- Значит, эсир операци тума сĕнместĕр?..

- Чирлĕ çын йынăшса илсен Лука Семенч ун тавра пĕр-ик хутчен çаврăнкаласа илчĕ.

- Шел! Çамрăк çын! Пурнăç та курайман!

- Тăвăр апла пулсан хăвăртрах, - шеллесе илнипе сăмах хушрĕ Нина.

Чирлĕ çын хăрах аллине тăсса до... до... докт... тесе йынăшса илчĕ. Лука Семенч операци тумалли вырăна, сĕтелĕн сылтăм енне, пырса чарăнчĕ.

- Çăлас килет! Çăлас килет, Алексей Михалч!

- Сирĕн ирĕк, Лука Семенч, эпĕ хам шухăша кăна каларăм.

- Эпĕ... çăлса хăварма йышăнатăп!..

* * *

Лука Семенч операци пĕтерсе тухнă çĕре ăна пĕр çар çынни кĕтсе илчĕ.

- Эпĕ генерал хушнипе килтĕм, медицина службин лейтенанчĕ Крюков! - терĕ вăл честь парса.

- Мĕн пулнă апла генерала? Чирлĕ-и мĕн?

- Çук, сержант Солнцев çинчен пĕлме.

- Кам вăл Солнцев? - сестра çине пăхса илчĕ Лука Семенч. -Пур-и пирĕн ун пек çын?!

- Эпĕ астумастăп, - терĕ Нина кăшт шутласа илнĕ хыççăн, - ун пек çынна эпир операци туман пек, тен, урăх госпитале е медсанбата лекнĕ пулĕ...

- Çук! - хирĕçлерĕ лейтенант, - вăл сирĕн госпитале лекнĕ, паян кăнтăрла умĕн, йывăр аманнă хыççăн...

- Чимĕр-ха, кама халь операци турăмăр? - астуса илчĕ Нина. - Вăл мар-и Солнцев?

- Унăн нимĕнле документ та çук, - ответлерĕ Лука Семенч, - шырама лекет!

- Эпĕ ăна паллатăп, хамăр полкран, - терĕ лейтенант, - ирĕк парăр, доктор, курмашкăн!

- Тархасшăн! - килĕшрĕ Лука Семенч.

Операци пӳлӗмӗнчен простыньпе витсе урапапа илсе тухнӑ аманнӑ ҫын питне уҫса пӑхсан лейтенант хӑй шыранӑ Солнцева палласа илчӗ.

- Солнцев, йӑнӑшмастӑп, доктор, Саша Солнцев! - терӗ вӑл.

- Апла пулсан эсир питӗ кирлӗ мана, - терӗ Лука Семенч хулӗнчен тытса, — атьӑр-ха пӗрле.

Лука Семенч лейтенанта хӑй кабинетне илсе кӗрсен папка хушшинчен чир истории таса бланкине туртса кӑларчӗ.

- Ку интереслӗ тӗслӗх, тӗплӗрех каласа пама ыйтатӑп.

- Вӗсем вуннӑн пулнӑ, - терӗ лейтенант калама пуҫласа, - вунӑ хастар воин. Разведка пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсем пирӗн фронта хирӗҫ наступлени тума хатӗрленсе пӗр пысӑк боеприпас складне ҫывӑхах куҫарнӑ. Ҫав склада ӗнтӗ сиктерсе ярас задача тӑрсан вӗсем, ҫав 10 ҫын, задание пурнӑҫлама хӑйсен ирӗкӗпе килӗшнӗ.

- Так-так, - терӗ Лука Семенч ҫырса пырса.

- Вӑл ҫӗре эпӗ те астӑватӑп: тӗттӗм, ним те курӑнмасть. Вӗсем хатӗрленнӗ те кайнӑ. Кунта, сирӗн патӑрта, курӑнайман пулӗ, анчах малти ретре пушар, тӗтӗм-сӗрӗм тухнине ҫав ҫӗр пурте асӑрханӑ.

- Апла пулсан, сиктерсе янӑ? - ыйтрӗ Лука Семенч.

- Ҫапла, ӗҫе питӗ лайӑх пурнӑҫланӑ... Кайран нимӗҫсем пысӑк часть тапӑннӑ тесе шутласа танксем кӑларса янӑ. Тарса пытанма ӗлкӗрейменнипе вӗсем танксене хирӗҫ гранатӑсемпе бутылкӑсем ывӑтма тытӑннӑ. Ҫак ҫапӑҫура вара отряд шӑпах саланса пӗтнӗ. Шыраҫҫӗ халӗ, тупайман-ха, чылайӑшӗ вилнӗ пулас, хӑшӗ, тен, тыткӑна лекнӗ пулӗ.

- Солнцев вара?

- Солнцев хӑех пилӗк танк сиктерсе янӑ пулать, улттӑмӗшӗ айне хӑй сикнӗ...

- Мӗнле-мӗнле? - каллех ҫырма тытӑнчӗ Лука Семенч. - Ҫак вырӑна тӗплӗрех каласа парӑр!

- Тӗплӗн каласа пама пултараймастӑп, - терӗ лейтенант, - эпӗ хам та ҫынсенчен кӑна илтнӗ: тепӗр енчен, тӗплӗнрех тӗрӗслесе ҫитерейӗмен-ха.

- Мĕнле вилмен вăл? - тĕлĕнчĕ Лука Семенч, - ĕненме йывăр танк . айĕнче çын чĕрĕ юлнине!

- Пĕлме пултараймастăп, анчах сывă юлма ăна тĕттĕм пулăшнă пулĕ тетĕп е, тен, танкист хăй хăраса ӳксе танкне хăвăрт аякка пăрнă пулĕ...

- Хăçан аманнă-ха вăл?

- Танксене хирĕç кĕрешнĕ чух пулас, эпĕ ăна кăшт çеç чĕрĕ тупрăм. Вăл типсе ĕлкĕреймен пĕр лачака умĕнче тăсăлса выртнă. Ăш çунни, пыр типни илсе пынă пулĕ ăна унта.

Эпĕ вăл лакам хĕрринче тата икĕ çын виллине куртăм. Вĕсем те шыв шыраса пынă пулас, анчах каялла тухайман, унтах вилсе выртнă...

- Шывĕ юрăхлă-и ĕçме? - пӳлчĕ Лука Семенч.

- Эпĕ сăнаса пăхаймарăм, анчах çиелте юн паллисем пурччĕ.

- Калăр-ха, эсир тупнă чух тăн пур-и унăн?

- Вăл кăшт кăна чĕрĕччĕ. Гимнастерки хырăмпа шунипе симĕсленсе, шăтса пĕтнĕ...

- Ну, юрĕ, - терĕ Лука Семенч çырса пĕтерсе, - тав сире каласа панăшăн.

- Мĕнле ĕнтĕ, - ыйтрĕ лейтенант юлашкинчен, - пурăнайĕ-ши? Мĕн каламалла генерала?

Лука Семенч тарăннăн сывласа илчĕ.

- Врачсене кун пек ыйту час-часах параççĕ. Мĕнле калас? Ку хутра... шантарма пултараймастăп... сурансем ытла та йывăр!

***

Солнцев выртакан пӳлĕме (ăна уйрăм пӳлĕме вырнаçтарнă) ерипен Нина кĕчĕ. Çийĕнче чăлт-шурă халат. Кăвак куçĕсем йăвашшăн пăхаççĕ. Сарă çӳçĕсене пĕр тикĕс хыçалалла тураса илемлĕ чăмăркка туса хунă. Вăл кунта Солнцев сывлăхне пĕлме тесе килнĕ, кирлĕ пулсан çăмăллатма пулашакан эмелĕсене те кĕсйинех чиксе килнĕ. Акă вăл алăкран кĕрсен пĕр-ик утăм тăвать те чарăнса тăрать, Солнцев çинелле пахать, куçĕсем хупă, кăкăрĕ çинче çӳхе утиялĕ кăна сывланă майĕпе хумханни курăнать, Нина тепĕр утăм малалла пусса унăн

çумнерех пырсан Солнцев вăранса кайса куçĕсене вăраххăн уçса пăхрĕ те каллех хупса хучĕ.

- Саша? - чĕнчĕ Нина йăваш сасăпа. - Саша, мĕнле пек?

Солнцев утиялне хăй çинчен сирчĕ.

- Саша! - чĕнчĕ каллех Нина, - йывăр-и?

- Кам эсир? - йынăшса сăмах кăларчĕ Солнцев.

- Эпĕ сестра, - çумне пукан илсе ларчĕ Нина. - Пĕлетĕр-и эсир хăвăр ăçтине?

Солнцев пӳлĕм маччине, стенисене сăнаса пăхса илчĕ.

- Пĕлместĕп, ăçта эпĕ? О-ох!..

- Эсир аманнă, сире операци тунă, - ăнлантарчĕ Нина, - халь госпитальре выртатăр!

Солнцев пулса иртнĕ ĕçсене астуса пĕр хушă чĕнмесĕр выртрĕ.

- Да, - терĕ вăл кайран, - эпĕ йывăр çапăçура пулнăччĕ, вара астумастăп...

- Эсир йывăр аманнă, сире операци Лука Семенч хăй турĕ.

- Кам вăл?

- Аслă хирург Вишневский!

- Калăр апла пулсан, тархасшăн: хăрушă-и ман сурансем?

- Вăл сире питĕ астуса операци турĕ, унăн пурте сывалаççĕ.

- Камăн? - каллех ыйтрĕ Солнцев.

- Лука Семенчăн, аслă хирургăн, хăй халĕ пушă мар, мана сирĕн сывлăха пĕлме тесе ячĕ.

- Калăр ăна манран... пысăк тав!

-•Ăна сирĕн сывлăх интереслентерет. Мĕнле туятăр хăвăра? Сурансем мĕнле? Пуç ыратмасть-и?

Нина хăйĕн аллине Солнцев çамки çине хучĕ, унтан пуçĕ çине куçарса çӳçĕ тăрах пĕр-икĕ хутчен ачашласа илчĕ. Кăпăш алли унăн пуç çийĕнченваскамасăр, хуллен тата кăшт-кăшт кăна çемçен, кăтăклăн çыпçăнса шăлса тухрĕ. О, мĕн тери ырă вăл хĕр ачашлăвĕ! Ачашланине пуçласа куракан çыншăн, çитменни çине

çакăн пек йывăр выртнă вăхăтра, çук та пулĕ унтан ырă хаваслăх!

- Эсир васкамастăр-и, Нина?

- Çук!

- Апла пулсан ларсамăр ман çумра пăртак.

Нина унăн алтымарне тытса пăхрĕ. Алтымарĕ хăвăрт тапать, анчах хăрушах мар. Хăрах уринчи çыххине шаккаса илчĕ. Унтан хырăм çинчи çыхăна та тĕрĕслерĕ. Вăл кăшт юнланнă, анчах халех улăштарма кирли палăрмасть.

- Пурте аван пырать сирĕн, - каллех ачашласа илчĕ Нина, - тепĕр ик-виç кун çакăн пек пулсан эсир сывă пулатăр.

- Эпĕ вилĕм аллинче пулнăччĕ. Ой! Мĕн тери аван çĕнĕрен пурнăç курма!

Солнцев утиялне сирсе хăрах аллине аяккалла çĕклесен Нина ун аллине çийĕнчех ярса тытса хăй чĕрçи çине хучĕ.

- Калăр-ха, Саша, - терĕ вăл ăна аллинчен тытса, - эсир танк айне сикнĕ-и?

- Çапла, ăна эпĕ астăватăп.

- Мĕншĕн? Нивушлĕ шел мар сире çамрăк пурнăç?

Солнцев шухăшласа илнĕ пек пулчĕ.

- Паллах, нимĕçсем сикмеççĕ танк айне!

- Вĕсем хăраççĕ! - ун шухăшне вĕçлеме васкарĕ Нина.

- Çук, нимĕçсем хаяр вăрçаççĕ, анчах танк айне сикмеççĕ.

- Мĕншĕн эппин!

- Вĕсем... О-ох! - хырăмне аллипе ярса тытрĕ Солнцев. – Вĕсем пирĕн çĕршыва улпут пулма тесе килнĕ, танк айне сиксен кам пулать вара улпут?

- Тĕрĕс, Саша, - терĕ Нина, - анчах ун пек тума хăрушă мар-и? Мĕн шутларăр эсир вăл вăхăтра!

- Эпĕ... Тăван çĕршыв çинчен кăна шутларăм! Эпир, - терĕ Солнцев малалла, - пурте Тăван çĕршыва юрататпăр, ăна çăлассишĕн çапăçатпăр, çавăнпа, кирлĕ пулсан, кашни воин хăй пурнăçне парать.

Нина унăн минтерне тӳрлетсе пачĕ, айĕнчи простыньне туртса якатрĕ. Алăк тулашĕнче сасартăк ура сассисем илтĕнчĕç, "Нина ăçта?" тесе ыйтни те хăлхана кĕрсе кайрĕ.

- Мана чĕнеççĕ! - терĕ Нина ура çине тăрса, - ну, Саша, хăвăртрах тӳрленĕр!

Тепĕр кун Нина аманнă çын патне пушă алăпа мар, хитре чечек çыххи илсе пычĕ, ăна стакан çине чиксе Солнцев пуçĕ тĕлне лартрĕ. Анчах Солнцев чечек çыххине курса савăнас вырăнне шухăша кайнă пек туйăнчĕ ăна.

- Мĕн çинчен шутлатăр, Саша? - ыйтрĕ Нина яланхи пекех унăн çумне ларса.

- Пурнăç çинчен шутлатăп, Нина... пурнăç çак чечексем пекех хитре, - терĕ Солнцев чечек çыххине аллине тытса, - çĕнтерӳ хыççăн пурнăç ытармалла мар лайăхланĕ, анчах... кам пулăп-ши ĕнтĕ эпĕ?

- Мĕнле Кам? - ăнланмарĕ Нина.

- Вăрçăччен эпĕ шофер пулнăччĕ, халь ĕнтĕ специальноçа улăштарма лекет.

- Мĕнле специальность килĕшет вара сире?

- Эпĕ тракторист пуласси çинчен шутлатăп, мĕнле, сирĕн шутпа, пултарăп-ши вăл ĕçе?

Нина нимĕн те чĕнменнине кура хăй тракторист пулас çуккине Солнцев хăех тавçăрса илчĕ.

- Çук, пултараймастăп пулĕ, хăрах урапа... Нина! - терĕ вăл сассине урăхлатса, - ăçта та пулин учителе кăларакан курссем пур-и?

- Пур-çке.

- Аван специальность вĕт учитель ĕçĕ?

-ь Питĕ аван, медицина та кая мар!

- Апла пулсан сывалса тухсанах учителе вĕрентекен курса каятăп!

Тепĕртак тăрсан Солнцев татах тепĕр ыйту тапратрĕ.

- Нина, каçарăр ыйтнăшăн: ман пек чăлахсене... ну юрĕ, сире каламасан та юрать, ахалех паллă.

- Мĕн вара? - ыйтрĕ Нина.

- Ахаль çеç, çухалнă япала çинчен тапратмасан та юрĕ ĕнтĕ.

- Мĕн? Мĕн çухалнă? - çине тăрсах тĕпчерĕ Нина.

Солнцев ассăн сывласа илчĕ. Унтан Нина куçĕнчен тӳрех пăхса çапла хушса хучĕ:

- Эпĕ тахçанах пĕр хĕре юратма пуçланăччĕ...

- Халĕ?

- Çук, вăл тахçанах пулнă, юрату майлă туртăну, анчах ăнланнăччĕ эпĕ вăл мĕнлине. Ой! мĕн тери аван вăл юрату тени...

- Ăçта вăл хĕр халĕ? Çыру çырнă-и эсир ун патне?

- Çук, шутлама та кирлĕ мар ĕнтĕ халĕ!

- Мĕншĕн?

- Мĕн усси хĕре манпа, урасăр çынпа...

- Тĕрĕс мар ку! - хыттăн каларĕ Нина, - сире тепĕр ал-ураллинчен ытларах, хытăрах юратмалла.

- Ĕненместĕп те, шанмастăп та!

- Мĕншĕн? Сире юратаççĕ!

Нина Солнцев аллине хăй кăкăрĕ тĕлне тытса хытă чăмăртаса илчĕ. Мĕн ку? Чирлĕ çын чĕрине ахальрен çĕклеме пĕлни-и е юрату пуçламăшĕ-и? Ăна Солнцев ăнланаймарĕ. Анчах алă кăкăра кăшт кăна сĕртĕнсе илни çанçурăма çемçетнĕ пек туйăнчĕ.

Çав вăхăтра пӳлĕме ӳсĕркелесе Лука Семенч пырса кĕчĕ.

- Мĕнле сывлăх? - ыйтрĕ вăл малтанах.

Доктор ответ кĕтсе иличченех суранлă çын çумне ларса унăн сывлăхне тĕпчеме пуçларĕ. Ыйтусем пачĕ, итлерĕ, хырăмĕнчен аллипе пусса пăхрĕ.

- Доктор! - ыйтрĕ Солнцев, - хăрах урана эсир татрăр ĕнтĕ, вăл юрĕ-ха, анчах тепри хуçăлнă вĕт, мĕнле, кĕскерех пулмĕ-и вăл?

- Пулмасть! - ответлерĕ Лука Семенч, — хуçăлнă вырăнне тĕлме-тĕл, тикĕс лартнă.

- Татнине вара? Протез тума пулать-и? Хăçан заказ пама юрать?

- Васкама кирлĕ мар...

Лука Семенч сыв мар çын патĕнче нумай тăмарĕ, пырса кĕнĕ пекех, кĕтмен çĕртенех тухса кайрĕ.

Пӳлĕмрен тухсан Лука Семенч чарăнса тăчĕ.

- Тĕлĕнмелле çирĕп çын! - терĕ вăл Нинăна, - перитонит пуçланать, вăл ав

ури çинчен калаçать.

- Пурнăç пуриншĕн те хаклă, Лука Семенч!

- Çапла, - килĕшрĕ Лука Семенч Нина сăмахĕпе. - Килĕшмест мана унăн хырăмĕ, хăратать. Нивушлĕ ăçта та пулин осколок пытанса юлнă-ши?

- Пуçĕ те вĕри унăн!

- Хăратать, васкавлă мерăсем кирлĕ!

- Мĕн тумалла?

- Тепĕр хут юн, глюкоза. Камфора кунне виçĕ хут, сульфидин, суранне... тĕрĕслесе пăхма лекет!

- Ирĕк парăр апла пулсан пурнăçлама?

- Тытăнăр! Лука Семенч пуçне усса утса кайнинчен унăн кăмăлĕ пăлханни палăрчĕ...

Пĕр ирхине, татах ик-виç кун иртнĕ хыççăн, медицина работникĕсен конференцине Лука Семенч пуçне усса вăраххăн утса кĕчĕ. Пĕр аллинче унăн хаçат, тепринче - чир историйĕ.

- Хисеплĕ коллегăсем! - терĕ вăл чĕтренчĕклĕ сасăпа, - паян эпĕ сире яланхи пек ăнăçлă сывату çинчен мар...

Итлесе ларакансем пĕр-пĕрин çине пăхса илсе шăпланса ларчĕç.

- Паян эпĕ сире хуйхăллă хыпар пĕлтеретĕп. Акă ман алăра "Правда" хаçат, унта пирĕн вилнĕ Солнцева Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен Указ пичетленнĕ.

Пурте ура çине тăрса пĕр хушă сăмах чĕнмесĕр, пуçĕсене пĕксе тăчĕç.

- Геройсен шучĕ ӳснипе пирĕн паян савăнмаллаччĕ, - çӳçĕсене шăлса илчĕ Лука Семенч, - анчах вăл пирĕншĕн хуйхă пулса тăчĕ. Александр Солнцев çур çĕр иртсен вилсе кайрĕ, эпир... çăлаймарăмăр ăна...

Врачсем пĕр-пĕрин çине, айăплине шыранă пек, кăмăлсăр пăхса илчĕç.

- Ыйту малтанах иккĕлле тăнăччĕ: операци тумалла-и е ахаль хăвармалла? Эпир операци туса йывăр çын пурнăçне тăвата куна çеç тăсрăмăр... Анчах эпĕ кун çинчен сăмах майĕпе кăна астутарса хăварасшăн, халĕ манăн сирĕнпе çак

хăрушă инкеке пула хам мĕнле шухăша кайни çинчен калаçса пăхас килет.

Лука Семенч ӳсĕрсе илнĕ хыççăн графинран шыв тултарчĕ.

- Эпир, вĕреннĕ çынсем, ватлăхпа килнĕ вилĕме кăна йĕркеллĕ тетпĕр, ыттисене вăхăтсăр, сарăмсăр вилĕм тесе шутлатпар. Мĕнле хаклама кирлĕ ĕнтĕ çак енчен Солнцев вилĕмне?

Вилнĕ çын пурнăçшăн хытă çунчĕ. Вилĕм тытăмĕнчен пĕр хут сиксе тухнăскер, пурнăçăн кашни юппинченех тытма тăрăшрĕ. Пурнăç кашни çыншăн нимрен паха! Халичченех эпир пурнăçран хакли тĕнчере нимĕн те çук тесе шутлатпар, çамрăксене пурнăç хакне нимĕнпе те виçме çук тесе вĕрентетпĕр. Тĕрĕс-и вăл? Анчах Гастелло, Матросов пек паттăрсен тĕслĕхĕ тепĕр майлă, урăхла кăтартса парать. Мĕн çăлма пултарнă пулĕччĕ ĕнтĕ çак вилĕмрен пирĕн Солнцева? Ман шутпа, танк айне сикмен пулсан е вĕсене хирĕç çапăçман пулсан вăл сывă та юлнă пулĕччĕ. Анчах Солнцев акă мĕне питĕ лайăх ăнланнă: нимĕç танкĕ - Тăван çĕршыв тăшманĕ, ăна хăвăнтан ирттерсе ярсан вăл тата ытларах çынсене пĕтерсе хурать. Çапла вара, паян пирĕн пурнăç хакĕ çук мар, пур, вăл - Тăван çĕршыва парăнни, уншăн çапăçни, кирлĕ пулсан - пуçа та шеллеменни. Çакă ĕнтĕ - пурнăç хакĕ. Ун пек вилĕм - чи мухтавлă, нимĕнпе танлаштарма çук вилĕм. Пурнăçа çакăн пек хакласа паракансене Тăван çĕршыв хăй историне ылтăн саспаллисемпе çырса хăварĕ.

Лука Семенч итлесе ларакансем çине пăхса илчĕ.

- Солнцев тупăкĕ умĕнче пурне те çакна калас килет: кашни çыншăн чи хакли –Тăван çĕршыв. Ăна харпăр хăй пурнăçĕнчен ытлараха хумалла, уншăн кĕрешес, ĕçлес туйăм кашни çын умĕнче, унăн тăнĕнче пулма кирлĕ. Çапăçура кăна мар, кулленхи мирлĕ ĕçре те! Геройсем пире акă мĕн тери паха ĕçе вĕрентеççĕ ĕнтĕ. Çавнах ыйтать Тăван çĕршыв хăй те, хамăрăн малашнехи телейĕмĕр те...

Нина юлашки каççенче куç хупман. Пĕрмаях Солнцев патĕнче пулнă, пăхнă, йăпатнă, унăн чакса пыракан сывлăхне эмелсем парса сиплеме тăрăшнă. Солнцев ĕнер унпа пĕр сăмах та калаçайман, ăнран тухнă, паян ирхине вара Нина унăн пӳлĕмне юлашки хут кĕрсе вăл сывламасăр выртнине тата хăй татса кĕнĕ

чечексем пуҫӗсене уснине курсан, пӗр вӑхӑт хытса кайса тӑнӑ. Мӗн ҫинчен шутланӑ Нина? Паллӑ мар, анчах вӑл пит-куҫне шӑла-шӑла тухнине асӑрхама йывӑр пулман. Нина халӗ ҫак ҫынсем хушшинчех кӗтесре, фикус ҫулҫисем хыҫӗнче, пытанса ларать. Кӗсйинчен чӑлт-шурӑ тутӑр кӑларса час-часах куҫӗсене шӑлса илет. Чӑн та ӗнтӗ, Лука Семенч сӑмахӗсем уншӑн та вырнаҫуллӑ пек туйӑнчӗҫ, анчах хурлӑха, ӑшран тулса хӑпаракан хуйха нимӗнпе те чарма ҫук. Тен, ҫамрӑк герой пурнӑҫӗ ытлашши шел туйӑннӑран, ҫӑлса хӑварассишӗн тӑрӑшни сая кайнӑран, тен, Солнцева чӑнах юратса пӑрахнӑран, унпа яланах пӗрле пулас кӑмӑл татӑлнӑран хурланать Нина? Кам пӗлет? Ҫав вӑрттӑнлӑх унӑн чӗринче юлӗ, ӗмӗр вӗҫӗнче тин аса илмелли вӑрттӑнлӑх пулса юлӗ.

*Пайраш, К. Пурнӑҫ хакӗ : [калав] / К. Пайраш // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 359-368.*